Валери ТУРКАЙ

# Çырăвĕсенче – çынлăх, çынлăх, çынлăх...

**Иртнĕ çул вĕçĕнче пирĕн халăхăмăрпа тĕнче педагогики Геннадий Никандрович Волковсăр тăрса юлчĕç.**

**Турă тума кирлĕ мар Геннадий Никандровичран /хăй пурăннă чухне те кирлĕ марччĕ – шел, ку тĕлĕшпе пĕрисем юлашки вăхăтра ытлашшипех тăрăшрĕç/. Турă пулман Геннадий Волков. Çын пулнă вăл. Чăн-чăн Çын. Хăйĕн паха енĕсемпе. Хăйĕн çитменлĕхĕсемпе.**

**Чи пахи – Геннадий Никандрович пĕтĕм пурнăçне тăван халăха халаллани, ĕмĕрĕ тăршшĕпех *Чăваш Ĕçне* /И.Я.Яковлев/ туни, чăваш халăхĕн ырă ятне çӳлтен-çӳле çĕклени, хăйĕн вĕренекенĕсене ырă та вăйлă, мăнаçлă та ирĕклĕ пулма сунни.**

**Г.Н.Волковăн пурнăçĕпе пултарулăхне пирĕн тĕпчемелле те тĕпчемелле...**

**...Манăн архивра Геннадий Никандрович Волков ман пата тĕрлĕ çулта янă çырусем упранаççĕ. Вĕсенчен хăшне-пĕрне пичетлесе халăх патне çитермеллех тесе шухăшлатăп. Ку шухăша аслă ăсчахăмăрăн шăллĕ Анатолий Никандрович Волков профессор та ырларĕ.**

24.09.85 ç.

Хаклă шăллăм Туркай! Салам сана, хĕрӳллĕ салам! Салам арăмупа ачуна та.

Те ман çыру çитеймерĕ сана, хурав тавраш пулмарĕ.

Сан çинчен нумай ырă шутласа пурăнтăм.

Хăрушсăрлăх комитечĕ[1] ачисен те сан çинчен начар шутлама нимĕн те çук. Хĕрӳ ĕнтĕ эсĕ... Анчах сан пеккисем пулмасан – халăх чĕрĕ юлайĕ-ши?

Халĕ ăçта-ши эсĕ?

Кăмăлу мĕнле?

Ĕçӳ ăнса пырать-и?

Юлташусем-тусусем йĕркеллĕ пулчĕç-ши, сутмарĕç-ши ним тĕлĕшпе те?

Ĕмĕтӳсем мĕнлерех пек?

Мана Петр Петрович /Хусанкай. – *В.Т./* ăпплантарса калана ас тутарнăччĕ эпĕ сана.

Лайăх пурăн, шăллăм. Хĕрачуна нумай савăнăç çитмелле, тивмелле пултăр.

Сывă пул!

Салампа *Г. Волков.*

11.11.85 ç.

* * *

Туркай шăллăм, маттурăм, салам сана хăвна та, хĕрӳпе арăмна та. Салам ĕçри ырă тусусене те. Лайăх пурăнăр.

Сана ырăпа асăнаççĕ. Хăвăн таврашунтисем те. Урам ячĕ – пĕлтерĕшлĕ çав тери[2]. Борис /Б.Чиндыков. – *В.Т./* – ытлашши оптимист. Хăй тĕллĕн пулса пымалла тесшĕн пулчĕ те. Пулса пымасть пулсан вара? Çав пĕчĕк япалана та халиччен тутараймасăр пурăнтăмăр вĕт-ха. Пĕчĕк япала-ши?.. Савăнăр-ха. Эпĕ – питĕ хавас. Тен, утăм хыççăн утăм халăхах пулса çитĕпĕр. Çапла мар-и?

Тата çĕнни мĕн пур? Савăнмалли, хавхаланмалли?..

Килте лайăх пурăн – Ульхупа, Илемпийӳпе. Ăшăнса пурăнăр. Кил ăшшине ним те çитмест. Тулта тем те пулĕ – килте яланах ăшă пултăр. Хăш-пĕр чух шухăшлатăп та: хам çунтăм-çунтăм та – арăма та çунтарса ятăм... Арăмсем вĕсем хамăртан ытларах çунаççĕ.

Сана чĕререн ырă сунатăп. Сан тумалли питĕ нумай-ха.

Сывă пул!

Салампа *Г. Волков.*

* * *

28.11.85 ç.

Салам-ха, шăллăм! Салам йышна та – хĕрӳпе арăмна. Хăвна чун-хавалĕсемпе çывăх çынсене те салам кала, Бориса /Б.Чиндыкова. – *В.Т./* – сăмахран.

Çырăву савăнтарчĕ те, ăмсантарчĕ те. Çеçпĕлпе пĕрле, сирĕнпе пĕрле пулас килчĕ. Вăйлă! Палăкĕ пирки калатăп[3]... Пирĕн патра пĕр палăк та пулаяс çуктăр. Пуян çынсем халь масар çинче К.В.Иванов палăкĕнчен /?!/ вăйлăраххине лартаççĕ. /Шараф Мударисăн куççулĕ тухрĕ çак памятник умĕнче – пуçласа килсен, малтанхи хут курсан: Эх, чăвашсем, чăвашсем, хăйсен мухтавне те чăннипе чыслама пĕлеймерĕç вĕт... Пуян е–сем /çырура çапла çырнă. – *В.Т./,* ав, масар çинче. Тукай монуменчĕ Куйбышев площадĕнче... Хусанта Тукайăн ултă памятник, улттăшĕ те пирĕннинчен лайăхрах/... И.Я.Яковлева тимĕртен карикатура туса патăмăр.



• Ардалион Игнатьев, Геннадий Волков, Валери Туркай.

Мĕнле çĕкленӳччĕ! Ун чух ман арăм хĕр пек, хĕрача – çиччĕре... Умра – çап-çутă кунсем, çĕр, ик çĕр çул пурăнас пек...

Сăн ӳкерчĕкĕ тупăнмарĕ-ха, Туркай. Тупăнсанах – йăлт эс хушнă пек туса ярса паратăп.

Сывă пул! Лайăх çӳре!

Салампа *Г.Волков.*

P.S. Геннадий Никандрович хăйĕн çак çырăвне чикнĕ конверчĕн кай енне çапла çырса хунă: Петĕр Яковлев /Петĕр Яккусен. – *В.Т./* кĕнекине – сăввисене – вуласа питĕ савăнтăм. Манран тав ту, салам кала. Тухса килнĕ кун сан патна кĕтĕм, эсĕ çук пултăн.

* * *

07.01.88 ç.

Çĕнĕ Çул саламĕ сана, шăллăм-маттурăм! Йышна та салам – арăмна, Илемпине. Ырă курăр, телейлĕ пулăр.

Асанне сăмахĕн пĕлтерĕшне паян çеç ăнланса пыма пуçларăм: *«Тăван çĕрте çĕре те çитĕн»...* Аттене Шăхасана куçарсан асанне: «Вилсен те каймастăп ялăмран», – терĕ. Аннен те унпах юлма тиврĕ. Атте пĕччен пурăнчĕ. Таврăнчĕ 6 çултан. Вилчĕ 72-ре. Асанне – 92-ре. Анне 84 кайрĕ. Хăй

Анчах кунта халăх айăпĕ çук. Халăх – халăхах. Халăх пулсах çитетпĕр пулĕ-ха. Ăмсану пирки ăнлантарам. Эп ун чух сан-ран /паянхинчен/ кăшт çеç аслăрах /пĕр 8-9 çул пулĕ, ытла мар/ – 1959 çул. Çеçпĕле чыслатпăр. Утмăлта çеçчĕ, халĕ, ав, хам ун çулне часах çитетĕп. Тĕлĕнсе каймалла. Сентименталлă мар Хусанкайăн куçĕсем шывланчĕç. Ун чухне институтра чăвашла-нимĕçле, чăвашла-французла, чăвашла-акăлчанла уйрăмсем пурччĕ... Çĕмĕрттерчĕ Çеçпĕл, кĕрлеттерчĕ тĕнчери аслă халăхсен чĕлхипе.

Von Kowali lis Tschikme!..

Вăйлă калаçрĕç ачасем. Савнине илекен çитмĕл çичĕ çула çитнĕ тет. Тăван çĕр – мĕнле иккен?

Мухтанмалли, шăллăм, ытлашшиех çук. Мĕн тунă пулăттăмччĕ-ши ĕçлеме май пулнă пулсан? Мĕн чухлĕ ĕмĕт шыва кайрĕ?!

Сывă пул! Лайăх пурăн.

Салампа *Г. Волков.*

P.S. Манăн тухса каланă пĕр сăмах пурнăçа улăштарса ячĕ. Ас туса калаç: арăмупа хĕрне те, ĕçе те, хăвна та сиен ан кӳр.

Май пулсан, ĕçе кĕме тăрăш[4].

* * *

23.02.88 ç.

Туркай шăллăм! Тавах сана ырă сăмахушăн, ырă хыпаршăн. Тус-ачусене те манран салам кала, тав ту. Такам, темле майпа çав пĕчĕк тиражпа тахçан тухнă кĕнекесене те манаймасть. Хам курман та-ха, вуламан та.

Ак тата – тем пысăкăш тиражпа /ырăсла-и?!/ «Мудрость воспитания» /Книга для родителей/ тухнă. Унта та ман «Золотая колыбель» /«Созвездие Земли»нчен/ асанне çинчен калани чылай пысăк вырăн йышăнса тăрать. Юнашарах, эс калашле, – Белинский, Руссо, Толстой, Сен-Симон...

Салтак кунĕ ячĕпе те – салам!

Лайăх пурăнăр. Арăмупа хĕрӳ санран ыррине, çепĕççине, ачашшине кăна курччăр.

Салампа *Г. Волков.*

* * *

Ку вара – открытка:

03.07. 89 ç.

Туркай шăллăм, тавах сана. Хĕрӳпе арăмна – салам.

Пит лайăх çырнă[5]. Чăнах. Вĕçĕнче Ян Амос Коменские асăнни те маншăн çав тери хаклă.

Çырăву çукки пăшăрхантарчĕ. Курса калаçманни – пĕр ĕмĕр. Атнере – салам. Ун статйи пирки пĕтĕм Мускав калаçать.

Сывă çӳре, маттурăм.

Санăн Хуначийӳ.

Кĕскен ăнлантарни:

[1]Ăсчахăмăр хăйĕн кунта пичетленнĕ пĕрремĕш çырăвĕнче *«Хăрушсăрлăх комитечĕ ачисем»* тенĕрен...

Г.Н.Волков ман пата, Геннадий Айхи пекех, 1985 çулта Мускавран уйрăмах нумай çыру ячĕ. Çав çулхи çĕртме уйăхĕнче мана, Чăваш АССР Писательсен союзĕ çумĕнчи илемлĕ литературăна пропагандăлакан бюро ĕçченне, «питĕ маттур пулнăшăн» ĕçрен кăларчĕç. Тепĕр уйăхран суд мана ĕçе каялла вырнаçтарчĕ. Геннадий Никандрович та, Геннадий Николаевич та çав тапхăр манпа ман çемьешĕн пĕрре те çăмăл пулманнине питĕ лайăх ăнланнă, хавхалантарма тăрăшнă. Хавхалантарнă та!

[2]*«Урам ячĕ – пĕлтерĕшлĕ çав тери»* тесе Геннадий Никандрович эп 1985 çулта Шупашкарти тĕп урамсенчен пĕрне И.Я.Яковлев ятне партарассишĕн тăрăшнине /«çӳлтисен» ячĕпе коллективлă çыру çырни, çав çыру айне паллă çынсене алă пустарса çӳрени, çырăвне «Советская Чувашия» хаçатăн тĕп редакторĕ М.И.Иванов патне леçсе пани.../ аса илсе калать. Ун чухне И.Я.Яковлев ятне «çӳлтисем», эпир ыйтнă пек, тĕп хулари тĕп урамсенчен пĕрне памарĕç пулин те, «Канашское шоссе» çапах та И.Я.Яковлев проспекчĕ пулса тăчĕ-тăчех.

[3]*«Палăкĕ пирки калатăп»...* Сăмах кунта Çеçпĕлĕн пулас палăкне туса хатĕрлес тĕлĕшпе «пăр вырăнтан тапранни» пирки пырать.

Шараф Мударис – тутарсен паллă çыравçи, «Нарспи» поэмăна тутарла питĕ ăнăçлă куçарнăскер /çакна тутарсен ку чухнехи ятлăсумлă çыравçисем пĕр кăмăллă пулса çирĕплетеççĕ/. Пирĕн, чăвашсен, Шараф Мударис ятне манма юрамасть.

[4]*«Май пулсан ĕçе кĕме тăрăш»...* 1987 çулта эп Мускаври А.В.Луначарский ячĕллĕ театр искусствин патшалăх институчĕ /ГИТИС/ çумĕнчи Театрăн аслă курсĕнчен вĕренсе тухса Шупашкара таврăнтăм. Анчах та Чăваш Ен тĕп хулинче ман валли ĕç вырăнĕ тупăнмарĕ – «çӳлтисем» мана ĕлĕкхи çылăхăмсемшĕн каçармарĕç /тĕрĕссине калас тăк – Мускавран Шупашкара таврăнсан хама йĕркеллĕ ĕçе вырнаçма памассине эп ГИТИСа вĕренме каичченех пĕлнĕ – 1986 çулта ЧАССР Писательсен союзне манран тасатмалла пулнă, çакна нумайăшĕ çирĕплетме пултарать/. Г.Н.Волковăн çак çырăвне илнĕ чухне эпĕ комсомолăн Чăваш обкомĕн «Молодой коммунист» хаçачĕн штатра тăман, шалу илмен корреспондентĕнче пулса ĕçлеттĕм. Геннадий Никандровича çакă та пăшăрхантарнă.

[5]*«Пит лайăх çырнă»...* Сăмах Г.Н.Волковăн Мускавра пичетленнĕ «Мудрость воспитания» /Книга для родителей/ кĕнекери статйи пирки «Молодой коммунист» хаçатра пичетленнĕ ман кĕске рецензийĕм пирки пырать.

**Çырусене кĕскетмесĕр, улăштармасăр пичетленĕ.**